

# Çитĕнÿсем хамăр алăра



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

**«Пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тата кашнин вăй-халĕпе майĕсене пĕрлештерсе хастар ĕçлесен, эпир кĕске вăхăтрах пысăк çитĕнÿсем тума пултаратпăр»,– тенĕччĕ Чăваш Ен тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев хăй çак тивĕçре ĕçлеме пуçланă чухне. Пирĕн районти ял ĕçченĕсем те çак тĕллеве тĕпе хурса тăрăшаççĕ. Район администрацийĕпе Чăваш Енĕн ял хуçалăх министерстви хушшинче тунă килĕшÿпе никĕсленсе ял хуçалăхĕнче тавар туса илекенсем 2020 çулта 22,1 пин тоннăран кая мар тĕш тырă, 1,2 пин тонна çĕрулми, 0,1 пин тонна пахчаçимĕç, 1,7 пин тонна аш-какай, 18,6 пин тоннăран кая мар сĕт туса илме палăртаççĕ. Çак калăпăшлă кăтартусене пурнăçласси вара чи малтанах çуракине вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса ирттернинчен нумай килет.**

**Кăçалхи çурхи уй-хир ĕçĕсен планĕпе килĕшÿллĕн районти хуçалăхсенче çурхи ака ĕçĕсене пĕтĕмпе 12641 гектар çинче туса ирттермелле, çав шутра çурхи тĕш тырă культурисене 9504 гектар акса хăвармалла. Тухăç никĕсне кĕркуннех хывма тытăннă – 2605 гектар çине кĕр тыррисем вырнаçтарнă, 6400 гектар çĕре кăпкалатса хăварнă. Кăçал техника культурисемпе силослăх культурăсем ытларах акса тăвасси те паллă.**

**Шанчăклă тухăç никĕсĕ – пысăк пахалăхлă вăрлăх. Районти хуçалăхсем вăрлăх çителĕклĕ хывса хăварнă, тĕрĕслев пур вăрлăх та ака кондицине тивĕçтернине кăтартса панă. Çакăнсăр пуçне ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсем элита вăрлăхсем туянаççĕ. Кĕрхи культурăсен лаптăкĕн 25 процентне элита вăрлăхсем йышăннă. Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши çурхи культурăсен элита вăрлăхĕсене те мартăн 1-мĕшĕ тĕлне 311 тонна е çуракинче кирлĕ хисепĕн 14 процентчĕ чухлĕ туянса хунă. Асăннă вăхăт тĕлнех 529 тонна минераллă удобренисем тата çураки ирттерме кирлĕ хисепĕн 37 процентчĕ чухлĕ дизель топливи туяннă. Вĕсене кÿрсе килессипе малалла тимлеççĕ.**

**Паллах, ял хуçалăх техникине те юсаççĕ. Унсăр мĕнле ака-суха пултăр. Ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсен пурĕ 86 трактор, 63 сеялкăпа 66 культиватор пурри паллă. Ку вăхăт тĕлне вĕсен пысăк пайĕ юсавлă. Пĕтĕмпех вара ака уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне юсаса çитерме тăрăшаççĕ. Пĕрлех ĕçлев сыхлавĕпе хăрушсăрлăх техникин правилисене пăхăнасси те тивĕçлĕ тимлĕхре пулĕ.**

# Кашни çул малалла утăмлать

–Пирĕн коллектив харпăр хăй ăсталăхне пĕрмай ÿстерсе пыракан тата профессионаллăхĕпе регионти тата федераци шайĕнчи конкурссенче хăйсене енĕпе лайăх кăтартма пултаракан çирĕп тĕллевлĕ те тăрăшуллă специалистсемпе никĕсленсе тăни савăнтарать,–тесе палăртнăччĕ пĕр интервьюра «АККОНД» компанисен ушкăнĕн генеральнăй директорĕ Валерий Николаевич Иванов.



♦ Район пуçлăхĕ А.Шакин, «АККОНД» предприятин генеральнăй директорĕ В.Иванов, «Акконд-агро фирма» АО ертÿçи Н.Фомин тата ЧР ял хуçалăх министрĕ С.Артамонов выльăх-чĕрлĕх комплексĕнче

«Акконд-агро фирма» акционерлă общество çуллен çĕнĕ хăватсене ĕçе кĕртнипе, çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсенчи çитĕнÿсемпе, производствăна аталантарма çуллен пысăк кредит ресурсĕсемпе предприятин укçи-тенкине явăçтарнипе, инвестицисем хывнипе, предприятире ĕçлекенсен хастарлăхĕпе палăрса тăрать. Кунти Наталья Ерастова оператор пĕлтĕр машинăпа ĕне сăвакан мастерсен республикăри конкурсĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнма пултарчĕ, сĕт туса илес ĕçĕнчи пысăк ăсталăхĕпе ЧР ял хуçалăх министерствин дипломне тата хаклă призне тивĕçрĕ, кайран Пушкăртстанра иртнĕ Пĕтĕм Раççейри конкурсра та республика чысне ăнăçлă хÿтĕлерĕ. Наталья Васильевнăн ĕçтешĕ Екатерина Георгиевна та умĕнхи çулсенче çакнашкал ăмăртусенче икĕ хутчен финала тухма тата Пĕтĕм Раççейри конкурссенче призлă вырăнсене йышăнма пултарнă. Машинăпа ĕне сăвакан вунă оператор ĕçлет предприяти фермине. Ытларахăшĕ хăйсене çирĕплетсе панă ĕнесенчен 6 пин килограмм ытла сĕт сунă. Çак шутра – Наталья Ерастова та. Предприяти çитĕнĕвĕсем çавăн пек хастарсен тăрăшулăхĕпе хушăнаççĕ те ĕнтĕ. Производствăна хывакан укçа-тенкĕ те çавна май пысăкрах тупăшпа таврăнать.

Предприяти те, çав шутра комплекс та, аталансах пыраççĕ. 2007 çулхи кĕркунне кăна выльăх-чĕрлĕх комплексĕ пулмалли вырăна суйласа илсе йываç пăта çапнăччĕ. 2019 çулта вара кунта 6304 тонна сĕт суса илнĕ. Ку вăл районти мĕнпур хуçалăх суса илнĕ сĕтĕн çурри ытла (46 процент). Продукци çулран çул хушăнса пырать. Пĕлтĕр те, сăмахран, умĕнхи çулхинчен 676 тонна нумайрах туса илнĕ ăна. Ÿсĕм 12 процент. Ĕнесен продуктивлăхĕ 6459 килограма çитнĕ. Вăл та çулталăк тăршшĕнче 233 килограмм пысăкланнă. Комплексра ку вăхăт тĕлне пысăк продуктивлă голштин йăхĕнчи 1982 пуç măйракаллă шултра выльăх усраççĕ, çак шутра сăвакан ĕнесем – 976 пуç. Вĕсем пĕлтĕр çулталăк тăршшĕпе куллен вăтамран 17,7 килограмм сĕт антарнă. Тупăшлăха ÿстерес тата халăха паха сĕт продукчĕсемпе ытларах тивĕçтерес тĕллевпе предприятире выльăхсен йышне ÿстерсех пыраççĕ. Çакăнпа пĕрлех производство лаптăкĕсем те сарăлаççĕ, çĕнĕ витесем, ытти объектсем хута каяççĕ. Пĕлтĕр кăна 5754 тонна е умĕнхи çулхинчен 702 тонна нумайрах сĕт сутнă. Унăн рынокри пĕр килограмм сутлăх хакĕ (НДСсăр) 24 тенкĕ те 32 пуспа танлашнă. Умĕнхи çул 20 тенкĕ те 15 пус пулнă. «Пахалăхне кура сĕтĕн сутлăх хакĕ ÿссех пырасса шанатпăр»,– терĕ Алина Валерьевна Васильева тĕп бухгалтер. Тĕпрен илсен, сĕте «АККОНДСĔТ» предприятие сĕт продукчĕсем хатĕрлесе кăларма леçнĕ. Вун-вун тĕрлĕ ассортиментпа ăсанать агрофирма сĕтĕнчен ĕçлесе хатĕрленĕ продукци районпа республикăри тата унăн тулашĕнчи лавккасен сентрисем çине. «АККОНДСĔТ» хăйĕн продукцийĕн пахалăхĕпе çуллен Пĕтĕм Раççейри конкурссемпе куравсенче лауреат тата дипломант пулса тăрать. Пĕлтĕр те Мускавра юпа уйăхĕн 9–12-мĕшĕсенче иртнĕ Раççейри XXI «Ылтăн кĕркунне» агропромышленнăç куравĕнчен ылтăн медальсемпе таврăннă. Хăрăсах 6 ылтăн медаль хушăннă вĕсен наградисен ярăмне пысăк пахалăхлă продукцишĕн. Экспертсем аккондçăсем курава тăратнă пур продукцие те чи пысăк хак панă. Вĕсен шутĕнче – 2,5 процентлă сĕт, 2,5 процентлă кефир ПЭТ-бутылкăсемпе тата 72,5 процентлă услам çу.

Çапла вара «От Красули» тата «Гармония дня» брендсемпе туса кăларакан сĕт продукцине тавар туянакансем лайăх пĕлеççĕ, вĕсенчен татăк тăмаççĕ.

Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче, теççĕ. Предприятири аграрисем ку тĕлĕшпе алă усса лармаççĕ, выльăх-чĕрлĕх валли çулленех утă-улăмпа сĕтеклĕ апатсем, фуражлăх тырă çителĕклĕ хатĕрлесе хураççĕ. Пĕтĕм утă-улăма рулонлаççĕ, пленкăпа витеççĕ, силоспа сенажа хранилищĕсене технологипе пăхнă срокра пахалăхлă хывса хăвараççĕ. Чăннипех те вăй хураççĕ предприятире ĕçлекенсем утă вăхăтĕнче, сенаж тата силос хывнă чухне, ир пуçласа каçчен ĕçлеççĕ, апат хисепĕшĕн çеç мар, пахалăхĕшĕн те е, урăхла каласан, вĕсенчи усăллă, тутлăхлă япаласене туллин упраса хăварассишĕн тăрăшаççĕ, çуллен пысăк сăвăм илме пулăшакан тата сĕт пахалăхне лайăхлатма май паракан культурăсем акса тума тимлеççĕ. 2019 çулта, сăмахран, предприяти 3456 гектар çĕре ĕçлесе хатĕрленĕ, тĕрлĕ культурăсем вырнаçтарнă. Тырă пурĕ 3795 тонна туса илнĕ, тухăç пĕр гектар пуçне 32,9 центнерпа танлашнă. Умĕнхи çул 26,7 центнер пулнă. Çĕр пулăхне ÿстерсе пыни, минераллă удобренисемпе анлăн усă курни, сидератсем акса çитĕнтерни, вăрлăхсене çĕнетсех тăни, сортлă вăрлăх акса туни, сăнавсем ирттерни – çаксем пурте тухăça хушма пулăшнă. «Сăнавсен калчасене çулçăсем урлă апатлантарни пысăк усă кÿнине кăтартса пачĕç, тухăça вăтамран тепĕр 4 центнер хушма пулăшрĕç»,–терĕ предприятин тĕп агрономĕ тата технологĕ Анатолий Николаевич Михайлов. –Сидератсем, уйрăмах горчица, çĕр пулăхне лайăхлатма май параççĕ. Горчица акса усă курнă лаптăксенче çĕр парлатса тăрать. Пусăçавранăшĕнче çавăн пек ÿсен-тăран питĕ кирлĕ». Вăл предприятин кăçалпа пĕлтĕр çĕр лаптăкĕ кăштах хушăннине, Лачкасси патĕнче 144,

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)



♦ Сенажлăх массăна вĕтетсе турттараççĕ

## Аграрисене – субсидисем

Чăваш Енĕн ял хуçалăх министерстви ўсен-тăран ўстерес ĕçе, элита вăрлăх ĕрчетнине тата сĕт туса илнине пулăшса субсидисем тўлеме тытăннă. Çапла февральте пĕрремĕш тўлев – 95,4 миллион тенкĕ куçарнă. Ку вăл асăннă енĕçсемпе субсидисен планпа пăхнă çулталăкри калăпăшĕн 92 процентне танлашать.

Çакăнсăр пуçне иртнĕ çулхинчен пĕр уйăх маларах элита вăрлăхсем туянмашкăн тата ĕнесен продуктивлăхне ўстермешкĕн субсидисем пама пуçланă. Февральте патшалăх пулăшăвне илекенсене 76,5 миллион тенкĕ куçарса панă.

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 2-мĕш стр.)

Çăлпуç енче 116 гектар хушма çĕр илнине, вĕсене çумкурăксенчен тата кăткă тĕмĕсенчен ĕçлесе хатĕрленине каларĕ. Вăй хумасăр, хăй тĕллĕн нимĕн те йĕркеленмест. Кăçалхи тухăçшăн тăрăшса, кĕркунне 400 гектар кĕрхи культурăсем акса хăварнине, лаптăксен пысăк пайне кăпкалатса хатĕрленине те асăнчĕ. Кăçал 780 гектар çурхи тĕш тырă культурисем акассине пĕлтерчĕ. Сĕт антаракан культурăна – кукурузăна – 300 гектар вырăн параççĕ. Ăна валли анасене кĕркуннех сухаласа хăварнă. Вăрлăхне те 6 тонна, чикĕ тулашĕнче туса илнине, туянса хунă. «Хуçалăх уйĕнче акса сăнанă тăрăх çакăн пек вăрлăх хамăрăннинчен гектар пуçне вăтамран 100 центнер ытларах масса парать, пуçĕ те пĕр вăхăтра пулса çитет»,– асăрхаттарчĕ Анатолий Николаевич. Ку ĕнтĕ сĕтлĕ ĕнесемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Кăçал люцерна та хăйхаллĕн тепĕр 400 гектар акаççĕ. 1180 гектар вара унчченхи пур. Вăрлăхне тупсан, козлятнике те вырăн парасшăн. Малтанхи çулсенче вăй илсе кайсан, унпа вырăх апачлĕх нумай çул хушши усă курма май килет. Çав енчен те лайăх асăннă курăк – çулçисем тăкăнмаççĕ унăн, вырăхсем юратса çиеççĕ. Пĕр çул ўсекен курăксем 200 гектар çинче пулĕç. Çитес кунсенче çурхи туллăн элита вăрлăхне 15 тонна кўрсе килеççĕ, сортлă вăрлăх хăех тепĕр тухăç пулнине асра тытаççĕ. Тепĕр тесен, паха вăрлăх туяннăшăн патшалăх субсиди те парса пулăшать. Çакă та пĕлтерĕшсĕр мар. Паллах, пĕтĕм вăрлăха ака кондицине лартса, имçамласа, минераллă удобренисем парса акаççĕ. Çавăнпа 240 тонна аммиак селитрипе хутăш удобрени туянма палăртаççĕ. Техника топливăсăр чупмасть, ăна 200 тонна туянаççĕ. Эпĕ «Аккондагро фирмăра» пулнă кунсенче малтанлăха 120 тоннăлăх укçа куçарнине хыпар турĕç бухгалтеринчисем.

Техника тенĕрен, ăна та çурхи уй-хир ĕçĕсене хатĕрлеççĕ. Сăмахран, ака комплексĕпе ĕçлекен Кейс–310 тракторăн двигательне пĕркунах юсава ăсатнă. Ыттисене вырăнта пăхса яраççĕ. Механизаторсен кадрĕсем çитнине каларĕç. Тĕпрен илсен, вĕсем яваплăха туякан механизаторсем, нумайăшне лайăх пĕлетĕп.

Предприятире ку таранччен мĕн тунипе лăпланса лармаççĕ, малашлăхпа пурăнаççĕ, малашлăха инвестици хываççĕ. Вырăх-чĕрлĕх комплексĕнчех акă икĕ пысăк ĕне вити, 3 пăру вити, изолятор, пăрулттармалли уйрăм, пушмак пăрусем валли хăпартнă 270 пуçлăх вите, силоспа сенаж траншейисем, тырă хранилищи, арман тата ытти пур. Анчах вырăхчĕрлĕх йышĕ ўссе тата производство сарăлса пынине шута илсе, кăçалах 200-шер пуçлăх тепĕр икĕ пăру вити, пушмаксене сутас умĕн тытмалли 100 пуçлăх карантин уйрăмĕ, силос упрамалли хушма траншея тăвасшăн. Карантин уйрăмĕ хăех 5 млн тенкĕлĕх пулĕ. Кăçалах пулмĕ, тен, анчах планра тепĕр ĕне вити хăпартас ĕмĕт те пур. Ăрат хуçалăхĕ пулнă май, «Акконд-агро фирма» АО кашни çулах кĕтĕве çĕнетмелли ăратлă пушмак пăрусем сутать. Пĕлтĕр те 100 пуç сутнă. Кăçал та çавăн чухлĕ планлаççĕ. Çавăнпа карантинлăх вите питĕ кирлĕ хуçалăха. Пĕлтĕр предприяти 1 моловоз, 1 КамАЗ, унăн прицепне, кукуруза акмалли сеялка, пресс-подборщик туяннă, тырă сушилкине çĕнетсе йĕркеленĕ тата ытти те. Иртнĕ çул пысăк стройка тавраш̆е туман пулсан та, инвестицисен калăпăшĕ 18 млн та 579 пин тенкĕпе танлашнă. Çапла вара ял хуçалăх техникипе оборудование, ытти хăватсене çĕнетсе пымалли программăна пурнăçласа сахал мар укçа-тенкĕ хываççĕ. Кăçал та икĕ трактор туянасшăн. «Чи кирли – вĕсемпе тухăçлă усă курасси, предприяти хăватне малалла ўстерсе пырасси»,–пусăмларĕç ертўçĕсем. «Акконд-агро фирма» акционерлă обществăра пурĕ 150 çын тăрăшать. Иртнĕ çулта 14 ĕç вырăнĕ хушăннă кунта. 2019 çулта 1 ĕçлекен пуçне ĕç тухăçлăхĕ 1 млн та 248 пин тенкĕне çитнĕ. Ĕç тухăçлăхĕ çуллен ўссе пырать, виçĕмçул кăна вăл 1 млн та 053 тенкĕлĕх пулнă. Вăл хăпарнă май, уйăхри вăтам ĕç укçи те пысăкланнă, 24 пин те 383 тенке çитнĕ. Пĕтĕмпе вара предприяти 2019 çулта вырăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе çĕрĕçĕнчен, транспорт услугисенчен 187 млн та 272 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Çак шутра производствăн таса тупăшĕ – 42 млн та 203 пин тенкĕ. Субсидисем 29 млн та 336 пин тенкĕ пырса кĕнĕ. Производство рентабеллĕхĕ 28,9 процентпа танлашнă. Çакă та курăмсăр мар: предприяти çулталăк тăршшĕнче бюджета тата бюджет мар фондсене пурĕ 25 млн та 675 пин тенкĕлĕх налук тўлевсем хывнă.

Çапла вара «Акконд-агро фирма» акционерлă общество çултан-çул малалла утăмлать. Ĕç тухăçлăхĕ ўссе, ĕç условийĕсемпе технологийĕсем лайăхланса, механизаципе автоматизаци, çĕнĕлĕхсем вăй илсе пынă никĕс çинче производство шанчăклăн аталанса, предприятин тупăшлăхĕпе рентабеллĕхĕ пысăкланса, çынсен пурнăç шайĕ аваланса пырать.

**И.ГЛАДКОВ.**

### ЫЙТĂМ

**Конституцие кĕртме сĕнекен улшăнусем пирки мĕн пĕлетĕр?**

Общество шухăшне тĕпчекен пĕтĕм Раççей центрĕ (ВЦИОМ) 2020 çулхи мартăн 12-мĕшĕ тĕлне Раççей çыннисем РФ Конституцине кĕртме палăртакан улшăнусем пирки мĕн шухăшланине тĕпчесе пĕлнĕ.

Ытларахăшĕ – 87 процент таран – Конституцие улшăнусем кĕртессипе сасăлав пуласси пĕлет. Ыйтса тĕпчнĕ çынсенчен кашни иккĕмĕшĕ сасăлав хăш кун пуласси те калама пултарнă – 2020 çулхи апрелĕн 22-мĕшĕнче. Конституцие кĕртме палăртакан улшăнусем пирки калакан саккун проектне мартăн 10-мĕшĕнче Патшалăх Думи иккĕмĕш вулавра йышăнни – уйрăмах пĕлтерĕшлĕ пулăм. Раççей çыннисен 75 проценчĕ кун пирки илтнĕ. Сасăлава ыйтса тĕпченисен 69 проценчĕ хутшăнасси пирки каланă. 45 проценчĕ вара ку тĕлĕшпе хăйсен шухăшĕ уйрăмах çирĕп пулни çинчен пĕлтернĕ.

Раççей çыннисен 64 проценчĕ РФ Конституцине кĕртме сĕнекен улшăнусемшĕн сасăласшăн.

### ШУХĂШ

**Николай ПЕРЦЕВ: Тăвай районĕнчи МФЦ ертўçи.**

Виçĕ ача ашшĕ тата Тăвай шкулĕнчи ашшĕсен комитечĕн председателĕ пулнă май, унăн членĕсен тата хамăн шухăша пĕлтерсе, Тĕп саккуна кĕртме сĕнекен тўрлетўсем çынсен пурнăçне лайăхлатассине тĕпе хунине каласшăн. Вĕсен шутĕнче – çемьене, ача амăшĕпе ашшĕн прависене, ачалăха, арçынпа хĕрарăм союзне, аслă ăрăва хўтĕлени.

Ачасем Раççей Федерацийĕн патшалăх политикин тĕп приоритечĕ пулнине палăртнă. «Патшалăх ачасен ăсхакăл, кăмăл-сипет, кĕлетке аталанăвĕ, вĕсене патриотизм, гражданлăх воспитанийĕ парас, аслисене хисеплеме вĕрентес енĕпе условисем йĕркелет.

Патшалăх çывăх çыннисен тĕревĕсĕр юлнă ачасене те, хевтесĕр ватăсене те пулăшма тивĕç».

### АСЛĂ ÇĔНТЕРĔВЕ – 75 ÇУЛ

## Вăрçă хыççăн çар службине тăснă

**Çитмĕл пилĕк çул каялла, 1945 çулхи апрель уйăхĕн 14-мĕшĕнче, Константин Мукин аслă сержанта Хĕрлĕ Ялав орденпа чысланă. Совет çĕршывне тапăннă нимĕç фашисчĕсене хирĕç пынă çапăçусенче хăюлăх кăтартнăшăн тивĕç пулнă вăл çак наградăна.**




К.Мукин 1914 çулта Вăрманхĕрри ялĕнче çуралса ўснĕ. Вăрçă умĕнхи çулсенче ял совет ĕçтăвкомĕнче ĕçленĕ, Тăвайри çар комиссариатĕнчен вăрçа тухса кайнă. Малтан Ленинградски фронта лекнĕ, унта паттăр салтака «Ленинграда хўтĕленĕшĕн» медальпе наградăланă. 1943 çулхи октябрь уйăхĕнче, К.Мукин çулсăра тăнă 5-мĕш гвардейски армине 1-мĕш Украина фронтне параççĕ. Çапла вара вăл Хĕвеланăç Украинăна фашистсенчен ирĕке кăларма хутшăнать, Польша çĕршывне нимĕçсенчен тасатас тытăçусенче паттăрлăх кăтартать.

1945 çулхи январь уйăхĕнче Хĕрлĕ çар Одер юханшыв тăрăхне çитет. Сарлака, вăйлă юхакан шыв урлă каçмалла пулнă совет салтакĕсен. Хĕвеланăç енчи çыран та нимĕçсен вăйлă çарĕ оборона тытнă. Юханшыв урлă каçма кĕпер тумалла пулнă. Çак ĕçе понтон кĕпер тăвакан 3-мĕш бригадăна хушнă. Константин Мукин ертсе пыракан отделени ырми-канми ĕçлесе икĕ кунта 16 тонна груз чăтакан кĕпер хывнă. Нимĕçсем пĕр чарăнмасăр артиллерипе персе тăни те, самолетсемпе бомбăсем пăрахни те чарма пултарайман хастар салтаксене.

Çĕнĕ кĕпер тăрăх совет салтакĕсем танксемпе, пушкăсемпе, гаубицăсемпе Одер юханшывĕ урлă каçса наступлени пуçланă, нимĕçсене Хĕвеланăçнелле хăваласа кайнă. Çакăншăн нумай салтакпа командира наградăсем параççĕ, вĕсен шутĕнче пулнă та ĕнтĕ К.Мукин аслă сержант, кĕпер тăвакансен отделени командирĕ.

1945 çулхи майăн 9-мĕшĕ – Çĕнтерў кунĕ. К.Мукиншăн вăрçă вара майăн 11-мĕшĕнче пĕтнĕ. Вĕсен чаçĕ тата икĕ кун вăйлă çапăçусенче пулнă, Прага хулине фашистсенчен ирĕке кăларнă.

Вăрçă чарăнсан Константин Михайлович Мукин хăйĕн чаçĕнчех юлнă. Вăл Ростов облаçĕнче Каменск-Шахтински хулара пурăннă, унтах службăна малалла тăснă.

К.Мукинăн ачисем, мăнукĕсем Раççейра, Украинăра пурăнаççĕ. Вăрманхĕрри ялĕнче тăванĕсем пур.

«Они сражались за Родину. Янтиковский район Чувашской Республики» кĕнекере Константин Михайлович Хĕрлĕ Ялав ордена икĕ хутчен, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин I степень орденне тивĕçни, виçĕ хутчен аманни çинчен çырнă.

**Виталий ИВАНОВ.**
**Çĕнĕ Шупашкар.**

### ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔ

## Ачасемшĕн паракан тўлев

**Июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ўсĕмĕпе 3 çултан пуçласа 7 çулчченхи ачасемшĕн уйăхсерен укçа шутласа пама тытăнаççĕ.**

Тўлеве пĕчĕк тупăшлă, пурăнмалăх укçа-тенкĕ хисепĕнчен пĕчĕкрех виçеллĕ çемьесем илĕç. Çак тĕллевпе çемьен электронлă майпа заявлени парсан та çителĕклĕ, документсен ытти пĕтĕм пакетне, çемьен тупăшĕ çинчен калакан сведенисене кĕртсе, ведомствăсем хушшинчи çыхăнупа йышăнĕç. Гражданинран заявлени йышăннă хыççăн социаллă хўтлĕх органĕсем электронлă майпа гражданлăх актне çырнин Пĕрлехи реестрĕнчен ача çуралнине çирĕплетни илĕç.

Патшалăх услугисен порталĕнче уйрăм кабинет çук граждансем заявлени МФЦ е социаллă хўтлĕх органĕсем урлă та пама пултараççĕ.

Тўлеве пĕр çын пуçне тивекен тупăш пурăнмалăх укçатенкĕ минимумĕнчен пĕчĕкрех виçеллĕ çемьесем илсе тăрĕç. Енчен те çакăн пек çемьере ўсĕмĕпе 3 çултан пуçласа 7 çул таранччи ачасем темиçе пулсан, пособие кашни ачашăн парĕç. Çакăнсăр пуçне граждансене малтан пама тытăннă регионти тўлевсем тулли виçепех упранса юлĕç.

Пособие июлĕн 1-мĕшĕнчен пама тытăнĕç. Тўлеве çулталăклăх палăртаççĕ, 2020 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен шутласа параççĕ, чăн та, ача январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 3 çул тултарнă пулсан. Енчен те январьпе июнь вĕçленичченхи тапхăрта 3 çул тултарнă пулсан, ўсĕмĕпе 3 çул тултарнă кунран пуçласа хушса пама тытăнĕç. Пособи виçи кăçал ачан регионти пурăнмалăх укçа-тенкĕ минимумĕн 50 проценчĕ чухлĕ пулĕ. Çĕршывĕпе вăл вăтамран 5500 тенкĕпе танлашать.